Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнченпе тухать

18 (7551) № * Юн кун, 2008 ҫулхи мартӑн (пуш) 5-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

РФ Президенчӗн суйлавӗ

## Муркашсем те Д.А. Медведевшӑн сасӑларӗҫ

**Раҫҫей Президенчӗн 2008 ҫулхи суйлавӗн итогӗсем пирки Муркаш территори суйлав комиссийӗ пӗлтернинчен**

**Территорири участоксенчи суйлав комиссийӗсем – 51.**
**Суйлавҫӗсен списокӗсене кӗртнӗ суйлавҫӑсен хисепӗ – 15253.**
**Суйлав кунӗччен сасӑланӑ суйлавҫӑсен хисепӗ – 0.**
**Суйлав кунӗнче участоксенчи суйлав комиссийӗсем суйлавҫӑсене сасӑламалли пӳлӗмре суйлав бюллетенӗсем панӑ – 17793.**
**Суйлав кунӗнче участоксенчи суйлав комиссийӗсем суйлавҫӑсене сасӑламалли пӳлӗм тулашӗнче суйлав бюллетенӗсем панӑ – 3992.**
**Сасӑламалли илсе ҫӳремелли ещӗксенче суйлав бюллетенӗсем пулнӑ – 3991.**
**Сасӑламалли стационарлӑ ещӗксенче суйлав бюллетенӗсем пулнӑ – 17790.**
**Юрӑхсӑр тесе йышӑннӑ бюллетенсем – 364.**
**Участоксенчи суйлав комиссийӗсем открепительнӑй удостоверенисем панӑ – 1957.**
**Кандидатсем сасӑ пухнӑ:**
**А.В. БОГДАНОВ – 187 (0,86 процент);**
**В.В. ЖИРИНОВСКИЙ – 1945 (8,93 процент);**
**Г.А. ЗЮГАНОВ – 4906 (22,52 процент);**
**Д.А. МЕДВЕДЕВ – 14379 (66,02 процент).**
**Суйлавҫӑсен 86,7 проценчӗ сасӑлава хутшӑннӑ.**





***Сӑн ӳкерчӗксенче: Муркаш ялӗнчи суйлав участокӗсенче ир пуҫласа каҫченех халӑх таталмарӗ.***

**Пӗтӗм Раҫҫейри «Единая Россия» политика партийӗн Чӑваш регион политканашӗн секретарӗ Михаил МИХАЙЛОВСКИЙ:**

## «Медведев ҫӗнтерӗвӗ – Путин тата «Единая Россия» ҫӗнтерӗвӗ»

Мартӑн 2-мӗшӗнче иртнӗ Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗн суйлавӗн итогӗсене хак панӑ май ҫавна каласшӑн: Раҫҫей Федерацийӗн суйлавҫисем, Чӑваш Ен ҫыннисем Дмитрий Анатольевич Медведева нумай нациллӗ Раҫҫей ҫӗршывӗн Президенчӗ пулма суйласа пысӑк тивӗҫ шанса пачӗҫ.

Чӑннипех те президент суйлавӗнче Медведев ҫӗнтерни – Путин тата «Единая Россия» парти ҫӗнтерӗвӗ.

«Единая Россия» сӗннӗ кандидатшӑн ҫӗршывӗпе пӗтӗм суйлавҫӑсен 70,2 проценчӗ, Чӑваш Республикипе 2/3 пайӗ хӑйсен сассисене пачӗ. Ҫакӑ вӑл халӑх влаҫа шаннине,Раҫҫейре юлашки 8 ҫул хушшинче туса ирттернӗ ӗҫсене тивӗҫлӗ хак панине, суйлавҫӑсенчен ытларахӑшӗ ҫӗршыври тӑнӑҫлӑхшӑн пулнине кӑтартса парать.

Пирӗн халӑх ҫавна ӑнланса илчӗ: Раҫҫей малалла кайса пырассине чармалла мар, ырӑ енне пулса пыракан улшӑнусене ҫул памалла.

Пирӗнтен кашниех пуласлӑха хӑйне евӗр курать. Анчах та пурте эпир хӑватлӑ та пуян ҫӗршывра пурӑнасшӑн, кашниех хӑйӗн пултарулӑхне пурнӑҫа кӗртме, ачасене лӑпкӑ ларура ҫитӗнтерме, хӑйне валли тивӗҫлӗ кану кунӗсене шанма пултарӑр. Раҫҫей пек ҫӗршыв пуҫӗнче тӑраканӑн ку тӗлӗшпе ырӑнӗпе ответлӑхӗ епле пысӑк пулнине ҫынсем лайӑх ӑнланаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Президента халӑх шанни тухӑҫлӑ та шанчӑклӑ ӗҫлесе пыма, ҫӗршыври тӑнӑҫлӑха тивӗҫтерме питех те кирлӗ. Дмитрий Медведев халӑх шанӑҫне туса ирттермелли ӗҫсен лайӑх йӗркеленӗ программине тата ун умӗнхи Президентӑн ырӑ ӗҫӗсене малалла аталантарса пыма пулнипе тивӗҫрӗ. Владимир Путин унпа пӗрле унӑн командинче ӗҫлеме кӑмӑл туни Раҫҫей гражданӗсем ырласа йышӑннӑ политика курсӗ малалла та аталанса пырасса пӗлтерет. Пӗтӗм Раҫҫейри «Единая Россия» политика партийӗн Чӑваш регион уйрӑмӗн ячӗпе Чӑваш Ен суйлавҫисене Д.А. Медведева шаннӑшӑн тав сӑмахӗ калатӑп. Пӗрле пулсан эпир ҫӗнтеретпӗрех! Путин планӗсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе малашне пӗрле алла-аллӑн ӗҫлесе пырӑпӑр.

6-мӗш эстафета



## Ентешӗмӗре сума суса

Ю.И. Федотова асӑнса ирттерекен республикӑри 6-мӗш йӗлтӗрҫӗсен эстафети мартӑн 1-мӗшӗнче Калайкасси шкулӗнче пулнӑ. Асӑннӑ ӑмӑртӑва шкулсен, учительсен коллективӗсен командисем, предприятисемпе организацисен ертӳҫисем хутшӑннӑ.

Пӗтӗмпе 415 участник ҫав кун йӗлтӗр ҫине тӑрса ӑмӑртнӑ. Муркаш районӗнчен 16 шкул, Етӗрне районӗнчен 4 шкул, Ҫӗнӗ Шупашкартан 4 шкул, Канаш хулинчен 3 шкул команди вӑй виҫнӗ. Командӑсем республикӑри 8 районтан тата 4 хуларан пулнӑ.

Ӑмӑрту сумлӑхне ҫак тӗслӗх те аван ҫирӗплетет. Унта 415 участник хутшӑннӑ пулсан, хӑнасем 100 ҫынна яхӑн пулнӑ. Ҫанталӑкӗ те йӗлтӗрпе ӑмӑртма меллӗ пулни савӑнтарать.

**Сӑн ӳкерчӗкре: Етӗрне район пуҫлӑхӗ Е.М. Яранский, район пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов тата М.И. Федотов.**

**(Вӗҫӗ 4-мӗш стр.).**

РАЙОНТА: ӗнер, паян, ыран

### Хӗле пӗрле ӑсатар

Сулсеренех районта Хӗл ӑсатӑвӗн уявне ирттересси ырӑ йӑлана кӗнӗ. Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн 123-мӗш номерлӗ йышӑнӑвӗпе килӗшӳллӗн кӑҫал вӑл Муркашра мартӑн 8-мӗшӗнче, Мӑн Сӗнтӗрте мартӑн 9-мӗшӗнче иртет. Уява хатӗрленсе ирттерме 17 ҫынран тӑракан йӗркелӳ комитетне туса хунӑ. Ӑна район пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов ертсе пырать.

Хӗл ӑсатӑвӗн илемӗ ялански пекех кӳлнӗ лашасен конкурсӗ пулӗ. Ҫавӑн пекех художество пултарулӑх коллективӗсем илемлӗ юрӑ-ташӑпа савӑнтарӗҫ. Муркашри уяв сцени ҫине Калайкассинчи, Сыпайри юрӑпа ташӑ ансамблӗсем, Тойкилтӗри эстрада, «Муркаш» фольклор ушкӑнӗсем, шкул ачисем тухӗҫ. Мӑн Сӗнтӗрте вара «Янаш», «Екрем» халӑх коллективӗсемпе Юнкӑри тата Тренккӑри юрӑпа ташӑ ансамблӗсем, шкул ачисем хӑйсен пултарулӑхӗпе савӑнтарӗҫ. Уявра спорт ӑмӑртӑвӗсем иртӗҫ. Хӗл ӑсатӑвӗ Муркашра та, Мӑн Сӗнтӗрте те 10 сехетре пуҫланать.

Ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсене, предприятисемпе организацисен ертӳҫисене вырӑнсенче те ҫакнашкал Хӗл ӑсатӑвӗн уявӗсене йӗркелеме сӗннӗ.

### К. Иванов яч. хис. хуҫалӑхра – пӗрлехи пуху

Февралӗн 27-мӗшӗнче К. Иванов ячӗпе хисепленекен ял хуҫалӑх производство кооперативӗн пӗрлехи пухӑвӗ пулса иртнӗ. Унта сӳтсе явма тӑратнӑ ыйтусем шутӗнче хуҫалӑхӑн 2007 ҫулхи производство ӗҫӗ-хӗлӗн итогӗсене пӗтӗмлетессиу, ҫӗнӗ, перспективлӑ идейӑсене пурнӑҫа кӗртессин планӗсем, 2008 ҫулхи производствӑпа финанс планне ҫирӗплетесси тата ял хуҫалӑх предприятийӗн ҫӗнӗ ертӳҫине суйласси пулнӑ.

Ҫак тапхӑрччен кооператив председателӗн тивӗҫӗсене вӑхӑтлӑх Родион Алексеевич Грачев туса пынӑ пулнӑ. Кооператив членӗсем ытларах сасӑпа ӑнах хӑйсен председателӗ пулма шаннӑ. Пухӑва район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов та хутшӑннӑ, тухса каланӑ.

### Сӗт сӑвассипе «Геройсем» малта

2008 ҫулхи мартӑн 4-мӗшӗ тӗлне районти предприятисенче сумалли ӗнесем 2878 пуҫ шутланаҫҫӗ. Пӗтӗмӗшле сӑвӑм 31093 килогрампа танлашать. Кашни ӗне пуҫне вӑтамран 10,8 килограмм сӗт суса илнӗ. Иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑтра сӑвӑм 11,0 килогрампа танлашнӑ.

Ӗнесенчен сӗт ытларах суса илессипе «Герой» ял хуҫалӑх производство кооперативӗ малта пырать. Кунта сӑвӑм кунсерен кашни ӗне пуҫне вӑтамран 16,5 килогрампа танлашать. «Оринино» (14,1 килограмм), Суворов яч. хис. (15,3), Ильич яч. хис. (12,9), «Ударник» (12,8) хуҫалӑхсем те сӗт сӑвассипе япӑх мар кӑтартусем тӑваҫҫӗ.

«Муркашри сӗт-ҫу завочӗ» уҫӑ акционер обществи 1-мӗш сортлӑ сӗте хуҫалӑхсенчен НДС шутламасӑр 11 тенкӗ те 70 пуспа туянать.

### Ҫемьесем ытларах чӑмӑртанаҫҫӗ

Район администрацийӗн ЗАГС пайӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх кӑҫал районӗпе пӗтӗмпе 25 ача ҫуралнӑ. Чи нумайӑйи февральте ачасем Муркаш ял тӑрӑхӗнче ҫуралнӑ – 4 ача.

Отчетлӑ тапхӑрта пурнӑҫран 50 ҫын уйрӑлса кайнӑ. Оринин, Шетмӗпуҫ, Йӳҫкасси тата Ярославка ял тӑрӑхӗсенче вилекенсем йышлах мар. Ҫынсем вилесси чи пысӑкки Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхӗнче – 9 ҫын.

Февральте 17 ҫемье чӑмӑртаннӑ (иртнӗ ҫул ҫав тапхӑрта – 13 ҫемье). Туйсем ытларах Мӑн Сӗнтӗр, Муркаш, Оринин, Шетмӗпуҫ, Ярапайкасси, Ярославка ял тӑрӑхӗсенче кӗрленӗ.

Отчетлӑ тапхӑрта 6 ҫемье арканнӑ.

### Аш-какай сутӑнать

Район администрацийӗн ял хуҫалӑх пайӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх, 2008 ҫулхи февраль уйӑхӗнче районти патшалӑх ветеринари учрежденийӗсем 278 выльӑх ашӗн (26,7 тонна) ветсанэкспертизине ирттернӗ.

Чӑваш Республикин патшалӑх ветеринари служби ирӗк панипе Чӑваш Республикин тулашне 104 выльӑх ашне (8,8 тонна) тиесе ӑсатнӑ, вӑл шутран ӗне выльӑх ашне – 53 пуҫ (6,2 тонна), сысна ашне – 51 пуҫ (2,6 тонна), сурӑх ашне – 4 пуҫ.

**Л.ПАВЛОВА, В. ШАПОШНИКОВ хатӗрленӗ.**

## Ҫырӑнтару – 2008
## Малтанхи хакпа ҫырӑнӑр

**«Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата июнь уйӑхӗнчен илсе тӑма февральте малтанхи хакпа ҫырӑнтараҫҫӗ. Ултӑ уйӑха ҫырӑнмалли хак – 169 тенкӗ те 62 пус. Район хаҫатне хакланиччен ҫырӑнса илӗр!**
**РАЙХАҪАТ РЕДАКЦИЙӖ.**